26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943 АПРЕЛЬ 11 ВЫРСАРНИКУН 78(6315) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çар çыннисен çемьисемшĕн тăрăшассине вăйсăрлатмалла мар

Çар çыннисен çемьисемшĕн пирĕн пĕтĕм халăх тăванла тăрăшать. Фронтовиксен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе республикăра пулса иртнĕ вунăкунлăх çак пулăшăвăн вăйĕ питех те пысăк пулнине уççăн кăтартса пачĕ.

Вунăкунлăх вăхăтĕнче республикăра çар çыннисен çемьисене пулăшмашкăн продовольстви тата укçатенкĕ фончĕ тунă, 18.600 тонна тырă, 19.870 тонна çĕрулми, атăпушмак, тумтир тата ытти те чылай пухса хатĕрленĕ, 200.000 тенкĕ укçа пухнă. Фронтовиксен çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕслесе 30.000 ытла çемьене пулăшу панă. Апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра çар çыннисен çемьисемпе вăрçă инваличчĕсене 186.255 тенкĕ, 34.495 пăт апат-çимĕç продукчĕсем, 8.000 комплект ытла тумтир, 3.552 мăшăр урана тăхăнмалли япаласем, 4.000 ытла выльăх-чĕрлĕх (вăл шутра 9 ĕне), 15.373 пăт выльăх апачĕ панă, 33.054 кубометр вутă турттарса 14.058 çемьене пулăшнă. Фронтри юлташсен 180 çемьине лайăх хваттерсене вырнаçтарнă, 367 хваттере юсанă, 731 çемьене столовăйсенчен апат-çимĕç илсе тăма çирĕплетнĕ, тумтир тата атă-пушмак юсаттарма ятарласа 41 мастерской çĕнĕрен уçнă, 166 ачана садсемпе яслисене вырнаçтарнă тата ытти те.

Вунăкунлăха Шупашкар, Вăрнар тата Октябрьски районсенче лайăх организацилесе ирттернĕ. Шупашкар районĕнче фронтовиксен çемьисен пурнăçпа йăла условийĕсене тĕрĕсленĕ хыççăн 285 çемьене 652 центнер тырă, 237 сысна çури, 4 ĕне, 2 качака, 7 пăру, 10 мăшăр çăматă, 173 тумтир, 1.050 метр мануфактура панă, 74 çемьене пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕсем уйăрса панă, акмалли вăрлăх хатĕрлесе пулăшнă. Октябрьски районри Маяковский ячĕпе тăракан колхозра фронтовиксен çемьисен хваттерĕсемпе тумтирне юсас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем организациленĕ. Вĕсем кĕске вăхăтрах 12 мăшăр тумтир, 5 çурт юсанă.

Çар çыннисен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе вунăкунлăхра тунă ĕçсем пысăк. Анчах пирĕн вĕсемпе лăплански лармалла мар. Вунăкунлăх результачĕсене çирĕплетсе, çар çыннисен çемьисене пулăшассине малалла та вăйлатас пулать, ку ĕçе куллен туса пырас пулать. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шăмăршă, Тăвай тата Комсомольски районсенче вăйлăн ĕçлемелле. Вĕсем вунăкунлăха начар организацилесе ирттерчĕç. Шăмăршă районĕнче, сăмахран, продовольстви фончĕ валли пĕтĕмпе те 33 центнер çăнăх, 44 центнер çĕрулми çеç пухнă. Çав вăхăтрах Шупашкар районĕнчи пĕр Заводской ялсовечĕ кăна 54,4 центнер тырă, 195 центнер çĕрулми пухса хатĕрленĕ.

Партипе совет органĕсен тата çар çыннисен çемьисене государство енчен пулăшса тăрас тĕлĕшпе ĕçлеме тунă отделсен çĕршыва хӳтĕлекенсен çемьисене пулăшас тĕлĕшпе тумалли ĕçсем питех те нумай-ха.

Вĕсен, чи малтанах, пособи е пенси тӳлес ĕçри кăлтăксене пĕтермелле. Пособи тата пенси тӳлемелли закона тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пымалла. Ку тĕлĕшпе хăшпĕр районсенче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Сĕнтĕрвăрри районĕнче 191 хуçалăха 19.452 тенкĕ укçа, 29 центнер аш-какай, 411 литр сĕт йăнăш тӳлеттернĕ. Сĕнтĕр районĕнче тĕрĕслесе пăхнă 11 ялсоветра пособи илме тивĕçлĕ 40 çемье пособисĕр пурăннă. Советски районри Шĕмшеш ялсовечĕн исполкомĕ пособи илекенсен списокне районри комиссине пĕр çулталăка яхăн памасăр тăнă. Хучаш ялсовет исполкомĕн председателĕнче ĕçленĕ Бойков пособи илмелли списока хăйне те кĕртнĕ. Вăл районри тимсĕр руководительсене улталаса, государствăран 912 тенкĕ укçа илнĕ.

Кунсăр пуçне фронтовиксен çемьисемпе вăрçă инваличчĕсене ĕçе вырнаçтарас тĕлĕшпе вăйлăн ĕçлемелле. Вунăкунлăх вăхăтĕнче республикăра 1.800 çынна ытла ĕçе вырнаçтарнă. Ку пысăк ĕç туни пулать. Анчах хăйсен ĕçĕпе фронта пулăшас текен фронтовиксен арăмĕсем, вăрçă инваличчĕсем, халлĕхе ĕçлемесĕр пурăнакансем, чылай-ха. Вĕсене ĕçе вырнаçма майсем туса парас пулать. Вĕсен ачисене яслисемпе площадкăсене тата ача сачĕсене вырнаçтарас тĕлĕшпе уйрăмах пысăк ĕç туса ирттермелле. Çураки çывхарнă май, ку ыйту партипе совет тата хуçалăх организацийĕсем умне çивĕччĕн тухса тăрать. Фронтовиксен ачисене ача сачĕсемпе яслисене вырнаçтарма, çĕнĕ яслисемпе ача сачĕсем уçма пирĕн майсем пур. Пуçаруллă руководительсем ку ĕçе юратса туни çеç кирлĕ.

Фронтовиксен тата эвакуаци йĕркипе килнĕ çынсен çемьисене пахча-çимĕç лартса çитĕнтерме çĕр участокĕсем уйăрса памалла. Вĕсене вăрлăх тупма пулăшмалла. Ку ĕç — йывăр ĕç, анчах республикăри кашни хулара, районра тата ялта ăна кĕске вăхăтра пурнăçа кĕртме пирĕн пур майсем те пур.

Хăшпĕр çĕрте çар çыннисен çемьисене пулăшас ĕç вăл — ку тĕлĕшпе ятарласа тунă отделсен ĕçĕ çеç тесе шутлама та пăхаççĕ. Çапла шутлани вăл — пачах йăнăш. Фронтовиксен çемьисене пулăшас ĕçе партипе совет органĕсен хăйсен ертсе пымалла, ку ĕçе мĕнпур общественноçа хутшăнтармалла. Вĕсен çакна пĕр минутлăха та манмалла мар: фронтовиксен çемьисемшĕн тăрăшни вăл — эпир Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшса тунă мĕнпур ĕçĕн çуррийĕ пулса тăрать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 9-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Апрелĕн 8-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтнĕ, артиллерипе минометсен 5 батарейине пусарнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра тăшман пехотăн 3 батальон вăйĕпе тата 20 танк пулăшнипе пĕр чаçăн позицине атакăланă. Пирĕннисем тăшман пехотине хирĕç тĕрлĕ хĕçпăшалран пеме пуçланă, пысăк çухатусем тунă хыççăн тăшманăн вара пирĕн оборона умĕнче çĕр çине выртмалла пулнă. Унтан пирĕн боецсем контратака тунă та штык вĕççĕн çапăçса нимĕçсене пысăк çухатусем кӳнĕ. Гитлеровецсем йĕркесĕр каялла чакнă. Çав çапăçура нимĕçсен 1.200 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Тăшманăн 9 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатса тăнă, артиллерипе минометсенчен персе гитлеровецсен çыннисемпе çапăçу техникине пĕтерсе пынă. Нимĕç пехотине 2 ротăна çити пĕтерсе тăкнă, артиллерипе минометсен 9 батарейине пусарнă.

* * *

Изюмран кăнтăртарахра пĕр часть вырăнти çапăçусем туса пынă. Çав çапăçусенче вăл тăшмана пăртак хĕссе хăйĕн позицийĕсене лайăхлатнă. Нимĕçсен 3 танкне, хăй тĕллĕн куçса çӳрекен 3 орудине тата 6 кĕпçеллĕ миномет пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 120 вилли выртса юлнă.

* * *

Кубань çинче пĕр чаçăн 19 снайперĕ юлашки кунсенче 200 ытла нимĕç салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Снайпер Концедал 18 салтака тата пĕр нимĕç офицерне вĕлернĕ, снайпер Гайдаров 27 нимĕçе вĕлернĕ, старшина Галицяни—28 çынна, сержант Гавриков — 69 çынна, старшина Мазницын 50 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Киев облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ сасартăк район центрне вăркăнса кĕнĕ. Пуçланса кайнă хаяр çапăçура нимĕç гарнизонне пĕтерсе тăкнă. Партизансем телефонпа телеграф станцине аркатса тăкнă, нумай трофейăсем тытса илнĕ. Партизансем вырăнти халăха нумай тырă, 8 тонна сахăр тата 10 тонна тăвар валеçсе панă.

Сумы облаçĕнче Украина партизанĕсен отрячĕ тăшманăн фронт еннелле каякан поездне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата 6 вагон ваннă.

* * *

Нимĕçсен 218-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă Ганс Д. ефрейтор çапла каласа панă: «Иртнĕ çулта эпир хĕл вĕçленессине çав тери кĕтеттĕмĕр. Çуркуннепе çулла нумай кĕтнĕ çĕнтерӳ килĕ тесе шанаттăмăр. Эпир кĕтни ахалех пулчĕ. Нимĕç армийĕ нимĕн те тăваймарĕ, Сталинград патĕнче калама çук пысăк катастрофа пулчĕ. Çывхарса килекен çăва эпир хумханса тата хăраса кĕтетпĕр. Нумайĕшĕ ĕнтĕ эпир çĕнтерессе шанми пулчĕç. Салтаксем хушшинче çапла сăмах çӳрет: «Кăм та кăм Гитлер хыççăн каять, вăл нимĕн тупма çеç мар, хăйĕн мĕн пуррине те пĕтĕмпех çухатать». Поста е разведкăна кайнă чухне салтаксем сывпуллашса пĕрне-пĕри çапла каласçĕ: «Леш тĕнчере курăпăр, сывă пулăр», теççĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ростов облаçĕнчи Красин ячĕпе хисепленекен шахта поселокĕнче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Оккупаци вăхăтĕнче гитлерла бандитсем поселокри нумай çынсене вĕлерсе пĕтерчĕç. Аркатса тăкнă шахтăра нимĕçсем тĕрме туса хунă, çавăнта вара арçынсене, хĕрарăмсене тата ачасене массăллăн пере-пере вĕлернĕ. Вĕлернĕ çынсене шахтăна пăрахнă. Персе пăрахас умĕн фашистла тискерсем нимĕçсен çар госпиталĕсем валли вĕлерекен çынсен юнне илнĕ. Юна çав тери нумай илнĕ пирки, арестленĕ çынсем вĕлерме сыхса хунă вырăнта ура çинче тăма та пултарайман. Тискеррĕн асаплантарнă хыççăн гитлеровецсем Антонина Сапельникована, унăн 14 çулхи ывăлне тата 18 çулхи хĕрне, Ф. Кузовлева, М. Моисеенкăна, И. Антоновича, Ф. Антоновича, П. Щеглова, М. Мельникова, П. Попова тата унăн хĕрне, С. Силютина, А. Иванникова, И. Василенкăна тата ытти нумай çынсене шахтăна пăрахнă. Вĕлерме палăртнă çынсене çарамаслантарса вĕсен тумтирне нимĕçсем хăйсен хушшинче уйăрнă. Персе пăрахнă çынсен çемьисене гестаповецсем—арестленисене ĕçлеме Германие илсе кайнă, тесе пĕлтерчĕ. Шахта стволĕ гестаповецсем асаплантарса вĕлернĕ нумай мирлĕ совет гражданĕсен вилĕм шăтăкĕ пулса тăнă.

Гитлерла тискерсем тунă çак нихçан илтмен преступленисем çинчен пĕтĕм совет халăхĕ пĕлсе тăтăр. Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене тата пĕтĕм совет патриочĕсене эпир фашистла юнĕçенсене пĕр шеллемесĕр таврăма чĕнетпĕр». Акт çине çаксем алă пуснă: Д. Захарченко, С. Фисенко, Д. Андропов, П. Козьменко, Н. Пересада, Житникова, Н. Поводарский тата В. Кузнецов.

Апрелĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра пĕр чаçăн боецĕсем халăх пурăнакан пĕр пункт патне, шăтарса кĕме хăтланнă нимĕç пехотин атакине сирсе пăрахнă. Çапăçура нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ тата тăшманăн 100 ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Морозов юлташ командир пулса ертсе пыракан чаçри снайперсем иртнĕ кун хушшинче 34 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче тăшманăн разведка тăвакан отрячĕ пирĕн пĕр подразделени хӳтĕлекен халăх пурăнакан пункта атакăланă. Пирĕннинчен йышлăрах пулнипе усă курса, нимĕçсем темиçе çурта йышăнса илме пултарнă. Кӳршĕри подразделени пулăшнипе ир тĕлне пирĕн боецсем нимĕç отрядне пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр соединенин артиллерисчĕсем тăшманăн 3 дзотне аркатнă, артиллерин 7 батарейине пусарнă, гитлеровецсен пĕр ротине çити сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

Зенитнăй артиллери нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Белый хулинчен кăнтăртарахра пĕр гвардейски чаçăн разведка тăвакан отрячĕ 40 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă тата пĕр паха высотана йышăнса илнĕ. Çав высота çинче çирĕпленсе ларса, разведчиксем тăшманăн виçĕ хутчен тунă контратакисене сире-сире пăрахнă. Çапăçу хирĕнче хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен вуншар виллисене хăварса нимĕçсем ăнăçу тăваймасăрах каялла чакнă. Пĕр соединенин снайперĕсем нимĕçсен 60 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшмана хирĕç артиллерирен тата минометсенчен персе тăнă. Артиллерирен персе тăнипе тăшманăн 3 орудине, 9 пулеметне пĕтерсе тăкнă тата 13 дзочĕпе блиндажне аркатса тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн артиллеристсем нимĕç автомашинисен колонни çине пенĕ, сахалтан та тăшманăн 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Полесье облаçĕнче кĕрешекен партизансен Ворошилов ячĕпе хисепленекен отрячĕ март уйăхĕнче тăшманăн фронта каякан 5 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Çав отрядри партизансен группи нимĕçсен полици участокне аркатса тăкнă. 23 гитлеровеца вĕлернĕ, ыттисем хĕçпăшалĕсене пăрахсах тарнă. Партизансем пулемет, 32 винтовка тата гранатăсемпе патронсем нумай тытса илнĕ.

Минск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ тăшманăн чугунçул эшелонне ӳпĕнтерсе янă. Паровоз, 4 вагон ваннă тата 25 метр тăршшĕ çул сиенленнĕ.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Смоленск облаçĕнчи Быково, Морово тата Власово ялĕсенче çаратса, тискер ĕçсем туса çӳрени çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç бандичĕсем пирĕн яла çаратса пĕтĕмпех тустарса пĕтерчĕç. 14 çултан пуçласа 50 çула çитнĕ çынсене, ĕçлеме пултараканнисене, пурне те нимĕçсем Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайрĕç. Гитлеровецсем пĕтĕм выльăха, пĕтĕм апат-çимĕçе тытса илнĕ, ялта юлнă стариксемпе ачасене выçă вилмелле туса хăварчĕç. Асăннă ялсенче виççĕшĕнче те пĕр ĕне те юлман. Быково ялне гитлеровецсем çунтарса янă. Унта мĕнпурĕ те çурма ваннă 5 çурт кăна юлнă». Акт çине çаксем алă пуснă: медсестра Булина, Прокопий Карпов, Екатерина Малышева тата Быково ялĕнчи ытти çынсем те.

Чăвашсен Академи театрĕ 25 çул тултарнă ятпа пулса иртнĕ чаплă лару

Енер Чăвашсен Академи театрĕ 25 çул тултарнă ятпа театр çуртĕнче партипе совет тата общество организацийĕсен представителĕсен, искусствăпа литература работникĕсен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Ларăва Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Евлампьев юлташ уçрĕ.

Президиумра—ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ Чарыков, Чăваш АССР Совнаркомĕн председателĕ Матвеев, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева, ЦК ВКП(б) çумĕнчи парти контроль комиссин Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ, Серов, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Никитин, М. Андреев, Бобров, ВКП(б) Шупашкар горкомĕн секретарĕ Романова, Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Евлампьев, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов, Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен управленийĕн начальникĕ Кăлган, Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Осипов, театр директорĕ Мордкович юлташсем, театр артисчĕсемпе искусство работникĕсем, писательсем.

Лару участникĕсем хисеплĕ президиума пысăк çĕкленӳпе аслă Сталин ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро составне суйлаççĕ.

Чăвашсен Академи театрĕн 25 çул хушшинчи ĕçĕсем çинчен доклад тума ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарьне Андреев юлташа сăмах параççĕ.

Андреев юлташ театр чĕрĕк ĕмĕр хушшинче тунă çитĕнӳсем çинчен чарăнса тăрать, театр коллективĕпе искусство работникĕсем умне практикăллă задачăсем лартать.

Юбиляра Шупашкар хулинчи пионерсем саламлаççĕ. Унтан театр коллективĕ ячĕпе килнĕ саламлă телеграммăсене вуласа параççĕ.

Театр директорĕ Мордкович юлташ ответлă сăмах калать. Вăл ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомне театр коллективĕ партипе правительство шанăçне тӳрре кăларассишĕн, Сталинла тапхăра тивĕçлĕ çĕнĕ спектакльсем парассишĕн пĕтĕм вăя тата пултарулăха хурса ĕçлĕ тесе шантарать.

Лару участникĕсем пысăк хавхаланупа Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру ячĕç.

Ун хыççăн Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ Андреева юлташ юбилей ячĕпе наградăланă театр работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Лару хыççăн художествăллă пай пулчĕ.

Чăвашсен Государство Академи театрĕ 25 çул тултарнă ятпа килнĕ саламсем

Театр 25 çул тултарнă ятпа сире хĕрӳллĕн саламлатпăр. Пултаруллă çĕнĕ çĕнтерӳсем тума сунатпăр.

Удмуртин Искусство ĕçĕсен управленин начальникĕ САРАТОВ.

* * *

Ульяновск облаçĕн драма театрĕн коллективĕ Чăваш театрĕ 25 çул тултарнă чаплă юбилей кунĕнче ăна салам ярать тата малашне те ăнăçусем туса пыма сунать. Пирĕн искусство хăйĕн пысăк чăнлăхĕпе пирĕн курайман тăшмана çапса аркатас сехете çывхартма пулăштăр.

Театр директорĕ МАЛЮТИН,
Художествăллă руководитель ДАШКОВСКИЙ.

* * *

Чăвашсен Государство Академи театрĕ çирĕм пилĕк çул тултарнă кун ВЛКСМ Облаçть Комитечĕ театр коллективне комсомолла хĕрӳллĕ салам ярать.

Театр искусстви ĕççыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре вăйлă хĕçпăшал пулса тăрать. Вăл анлă массăсем хушшине Маркспа Энгельсăн, Ленинпа Сталинăн аслă идейисене илсе пырать, ĕçхалăхне социализмăн историллĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен, тылри совет çыннисем пĕтĕм вăя хурса ĕçлени çинчен тата совет халăхĕ нимĕç оккупанчĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешни çинчен каласа парать.

Чăвашсен Государство Академи театрĕн работникĕсем малашне сцена искусствине аталантарас тĕлĕшпе, çамрăксемпе ачасене пĕлӳ илессишĕн хавхалантарма, хăюллă та хастарлă пулма, коммунизм обществин пур енĕпе те культурăллă строителĕсем пулма, совет çĕршывне, большевиксен партине, Сталин юлташа чĕререн парăнса тăма вĕрентес ĕçре пирĕн партие пулăшас тĕлĕшпе çĕнĕ çитĕнӳсем тăвĕç тесе ВЛКСМ Обкомĕ шанса тăрать.

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ.

Фронтовиксене—илемлĕ литература кĕнекисем

КАЛИНИНО. Районри комсомолецсем фронтовиксене илемлĕ литература кĕнекисем ярса параççĕ. Вĕсем çак кунсенче 500 кĕнеке ытла ячĕç.

Чăрăш Хирлепри «Радио» колхоз çумĕнчи комсомол организацинче тăракан комсомолецсем кашниех 2—3-шар кĕнеке ярса пачĕç.

Б. Шорников.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промысла кооперацийĕн артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулти март уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ промысла кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулти март уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне, Сĕнтĕрвăрринчи «Парижская Коммуна» артельрен илсе, Чăвашпромсоюз системин Сĕнтĕр районĕнчи «Волга» артеле пама (артель правленийĕн председателĕ Малинов, райсовет исполкомĕн председателĕ Свешников) тата ăна ĕçре уйрăмах палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа пама йышăннă.

Кунсăр пуçне Совнарком çак артельсене премисем пама йышăннă:

Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан артеле (правлени председателĕ Баранов, райисполком председателĕ Ярандайкин)—5.000 тенкĕ;

Çĕрпӳ районĕнчи Упакассинчи артеле (правлени председателĕ Тимофеев, райсовет исполкомĕн председателĕ Хабаров) 4.000 тенкĕ;

Шупашкар хулинчи «Вышивка» артеле (правлени председателĕ Егорова, хула совет исполкомĕн председателĕн заместителĕ Плетнева)—3.000 тенкĕ;

Сĕнтĕр районĕнчи Янăмри «Дружба» артеле (правлени председателĕ Пайманова) — 3.000 тенкĕ пама йышăннă.

Совнарком март уйăхĕнче çак артельсем лайăх ĕçленине палăртнă: Йĕпреç районĕнчи Упакассинчи, Йĕпреçри тата Çĕнĕ Чурашри артельсем; Канаш хулинчи «Авангард» тата «Первое мая» артельсем; Улатăр хулинчи «Красный восход» тата «Красная швея» артельсем; Куславкка районĕнчи Киров, Горький, Клара Цеткина ячĕсемпе тăракан артельсем тата Тĕмшерти артель; Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Парижская коммуна», «Крестьянский кузнец», «Портной», «Юрме тĕрĕ», Астакассинчи, Кĕçĕн Маклашкинăри, Анаткассинчи тата Банновăри артельсем; Первомайски районри Сигачри, Липовкăри тата Кивĕ Эйпеçри артельсем: Шупашкар хулинчи «Пекарь», «Красный кустарь» артельсем, леспромартельсемпе лесхимартельсем; Сĕмĕрле районĕнчи «Красный Октябрь», Ширшов ячĕпе тăракан, «Труженик» тата Альгешри артельсем; Етĕрне районĕнчи «Майăн пĕрремĕшĕ», Чкалов тата Сталин ячĕсемпе тăракан, «Красный яр» артельсем; Октябрьски районри Каранъялĕнчи «Труд» артель: Вăтам Пукашри артель; Сĕнтĕр районĕнчи Пушкăртри «Тĕрлекен» артель; Шăмăршă районĕнчи Вырăс-Чукалĕнчи артель; Красноармейски районри Енĕшкассинчи тата Карайри артельсем; Вăрмар районĕнчи Осипенко ячĕпе тăракан артель тата Чкаловски районри Чапаев ячĕпе тăракан артель лайăх ĕçленине палăртнă.

Çакăнпа пĕрлех Совнарком март уйăхĕнче çак артельсем пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртнă: Çĕрпӳ районĕнчи Туçари тата Хурнсурти артельсем; Ишлей районĕнчи Атăл ялĕнчи, Мамăшри, Катраçри, Ишекри, Тăрăнри, Чурачăкри, Чаканарти, Шетмĕпуçĕнчи, Шайгильдинăри, Мăналри тата Ыхракассинчи артельсем; Шупашкар районĕнчи Заводской ялĕнчи, Паçпакри, Лапсарти тата Чăрăшкассинчи артельсем; Красноармейски районри Вутланри тата Çĕньял Шетмĕри артельсем пачах çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Совнарком Промкоопераци март уйăхĕнче хăйĕн ĕçне чылай лайăхлатнине палăртнă, кунпа пĕрлех Промкоопераци управленийĕн уполномоченнăйне Степанов юлташа, промысла союзĕсен руководителĕсене тата районсемпе хуласен совечĕсен исполкомĕсен председателĕсене артельсем продукци кăларассине ассортиментсем тăрăх пурнăçа кĕртменнине кăтартса панă.

Совнарком промкоопераци работникĕсене Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва тата анлăнрах сарса яма, мĕнпур артельсем плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе те, ассортиментсем тăрăх та ирттерсе тултармалла тăвассишĕн çине тăрса кĕрешме чĕннĕ.

Çамрăксем комсомола кĕчĕç

Çак кунсенче комсомолăн Урапакассинчи (Етĕрне р.) пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Е. Димитриева юлташ) 5 çамрăк, ВЛКСМ ретне илчĕ. Вĕсенчен 3-шĕ хĕрачасем. Комсомола кĕнисем пурте колхоз производствинче колхозниксемпе колхозницăсене пример кăтартса ĕçлеççĕ.

А. Кольцов.

Колхозсен уйхирĕсенче хĕрÿллĕн ĕçлесе фронта пулăшар

Пирĕн бригада Рязань облаçĕнчи Рыбновски МТС-ри Даша Гармашăн трактор бригади чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕ. Даша Гармашăн бригади хĕрарăм-трактористкăсен 1942 çулхи Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕнче мала тухнă. Эпир унăн чĕнĕвне йышăнатпăр. Кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче хамăрăн тракторсене туллинрех ĕçлеттерсе çĕнĕрен пысăк çĕнтерÿсем тума эпир те хатĕр.

Иртнĕ çул эпĕ СТЗ маркăллă тракторпа 408,92 гектар сухаларăм, 1.063 килограмм горючи перекетлесе хăвартăм. Çавăншăн мана Чăваш АССР Верховный Совечĕ Хисеплĕ грамота парса пахаларĕ. Çак хаклă награда мана кăçал тата лайăхрах ĕçлеме хушать. Колхозсен уйхирĕсенче хĕрÿллĕн ĕçлени те нимĕç захватчикĕсене хирĕç хаяррăн çапăçни пулать. Çавăнпа та эпĕ кăçал икĕ çын вырăнне тăрса ĕçлеме обязательство илетĕп; СТЗ тракторпа хамăн сменăра сахалтан та 450 гектар сухалама, хама ĕçлеме панă горючие перекетлĕн тыткаласа 10 процент чухлĕ перекетлесе хăварма сăмах паратăп. Хамăрăн, трактористкăсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне тухса эпĕ Шайкина юлташа тракторпа лайăх ĕçлеме ăмăртăва чĕнетĕп.

Чăваш республикинчи трактористкăсем, тантăшсем! 1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйран ĕçлер, Хĕрлĕ Çара çĕнтерÿ тума мĕнпур вăйпа пулăшар!

Нина Кузьмина,
Тăвай МТС-ĕн трактористки.

67 колхозран 62-шĕ çуракине тухма хатĕр

ШАХАСАН, апрелĕн 10-мĕшĕ. (Хамăр корр., телефонпа). Çак иртнĕ кунсенче колхозсем çуракине туса ирттерме хатĕрленсе çитнине пăхса тухрĕç. Тĕслĕхрен çакă курăнчĕ: районри 67 колхозран 62-шĕ çуракине тухма тĕплĕн хатĕрленсе çитнĕ. Пилĕк колхоз çеç — Высоковка ялсоветĕнчи Сталин, Буденный, Ленин ячĕпе тăракан, Матьшÿри «Молодой колхозник» тата «Звезда» колхозсем çеç çуракине тухма хатĕрленсе çитмен.

Буденный ячĕпе тăракан колхозăн 35 центнер тĕрлĕрен вăрлăх çитмест, 12 лаша ĕçе тухма пачах юрăхлă мар. Колхоз хĕл вăхăтĕнче уя пĕр лав та тислĕк кăларман, вырăнти удобренисене пухман. Сталин ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан тата «Звезда», «Молодой колхозник» колхозсенче те çавăн пекех. «Молодой колхозник» колхозăн 90 центнер, «Звезда» колхозăн 225 центнер çĕрулми çитмест.

Комиссисем ку колхозсен ĕçĕсене тĕплĕн тĕрĕслесе, ĕçре халех улшăнусем тума халăха мобилизацилерĕç.

Район ялхуçалăх кадрĕсене вĕрентсе хатĕрлес енĕпе пысăк ĕç туса ирттернĕ.

Кĕске срокла курссенчен колхоз счетоводĕн ĕçне 23 çынна, бригадирсем пулса ĕçлеме 37 çынна, ферма заведующийĕсем пулса ĕçлеме 37 çынна, кок-сагыз звенисене ертсе пыма 50 çынна вĕрентсе кăларнă. МТС кăçал çĕнĕрен 74 тракторист, 15 комбайнер вĕрентсе хатĕрленĕ.

В. Веселов.

Кĕрхи тырăсене çуркунне апатлантарасси

Кĕрхи тырăсене вĕсем юр айĕнчен тухсанах, тăпра ăшăнма пуçланă вăхăтра апатлани питех те усăллă. Минераллă тата вырăнти удобренисемпе апат панă ыраш тата кĕрхи тулă калчисем хăвăрт симĕсленсе ÿсме тытăнаççĕ, çапла вĕсемшĕн вара çуркунне ир-кас пулакан сивĕсем те хăрушă мар.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «Государствăн 1943 çулта ялхуçалăхне аталантармалли планра» ахальтен мар партипе совет организацийĕсене тата колхоз правленийĕсене çак ĕçе пысăк вырăна хурса туса пыма хушнă. Пирĕн колхозсем кĕрхи тырăсене вырăнти удобренисемпе: кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе, кĕлпе, тислĕк шывĕпе, хура тăпрапа апатлантарма çăмăллăнах пултараççĕ. Çак ĕçе май килнĕ таран çуркунне ирт ерех туни кирлĕ.

Нумай чухне кĕрхи тырăсем юр айĕнчен вăйсăр тухаççĕ, хăвăрт çитĕнсе ÿсме вĕсем валли тăпрара азот, фосфор, калий нумай кирлĕ. Нÿрĕ тăпра çине азот, фосфор, кали нумай тытакан кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл, тислĕк шывĕ хуни калчасене лайăх тата хăвăрт ÿсме май парать. Колхоз бригадирĕсен, тырпулăн пахалăхне сăнаса тăракан инспекторсен халĕ çак ыйтупа тĕплĕн интересленмелле, кĕрхи тырăсене апатлантарас ĕçе анлăн туса пымалла. Пысăк тухăçлă тырпул туса илесси çак ĕçе тĕплĕн тата вăхăтра туниниччен нумай килет те. Вăйла тырпул туса илессишĕн тимлĕн кĕрешекен колхозсем çакна лайăх ăнланнă. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз халь тимлесех кĕрхи тырăсене апат парать. Хĕлле пухса хатĕрленĕ кайăк-кĕшĕк тислĕкне вĕсем типĕтсе сăнăх тунă. Ана халь кĕрхи тулă тата ыраш калчисем çине хураççĕ. Паянхи куна колхоз ыраш тата кĕрхи тулă калчисене пурĕ 45 гектар çинче апатланă.

Кĕрхи тырăсене минераллă удобренисемпе çак виçепе апатлантармалла: гектар çине сульфат аммоние 1—1,5 центнер, суперфосфата 1,5—2 центнер, кали тăварне — 0,75—1 центнер тăкмалла. Вырăнти удобренисенчен—кĕле гектар çине 4—6 центнера çити, кайăк-кĕшĕк тислĕкне 4—5 центнера çити тăкма юрать. Тислĕк шывне гектар çине 5—8 тонна таран тăкмалла.

Çуркунне апатлантарнă кĕрхи тырăсен калчисене уйхире тухма вăхăт çитсенех пурне те сÿрелесе хăвармалла. Кĕрхи тырăсене апат парас тĕлĕшпе кая юлмалла мар.

Т. Кружилин,
Ялхуçалăх Институчĕн доценчĕ.

Тăрăшса ĕçлет

Евдокия Никифорова Первомайски районри Именкасси колхозĕн ферминче ĕнесем пăхать. Вăл пăхакан ĕнесем яланах тутă. Пăрусене те вăл ачана пăхнă пекех тăрăшса пăхать. Е. Никифоровăна выльăхсене аван пăхнăшăн колхозниксем пурте ырлаççĕ.

М. Кириллова.

Общежитисене йĕркелес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен уйăхлăхĕ пулать

Комсомол организацисен пуçарăвне ырласа, апрелĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа майăн 15-мĕшне çити, çамрăксен городокĕсене, общежитисене, вĕсен таврашĕнчи вырăнсене тата йĕркелес тĕлĕшпе ЦК ВЛКСМ уйăхлăх туса ирттерме йышăннă. Уйăхлăх вăхăтĕнче комсомол организацийĕсем пÿлĕмĕсемпе бараксене, кил-картисене тасатас, вырăссене партиа вырăн тума, ... хăйсен вăйĕсемпе спортплощадкăсем хатĕрлес ĕçсем тумалла.

Нумай заводсенчи çамрăксем, уйăхлăха ирттермелли плана çирĕплетсе, общежитисене юсас тĕлĕшпе темиçешер сехет хушши ĕçлесе пама обязательствăсем илеççĕ тата вăл ĕçĕн лайăх результачĕсемшĕн ăмăрту пуçласа яраççĕ. Комсомолăн Тутар обкомĕ лайăх общежитишĕн ăмăрту пуçласа янă.

Уйăхлăха ирттерес ĕçре комсомол организацийĕсене парти организацийĕсем пысăк пулăшу параççĕ. Горьковри, Ивановăн тата партин ытти обкомĕсем уйăхлăха ирттерес пирки партипе хуçалăх активĕсене пухаççĕ.

Хăшпĕр наркоматсем ятарласа приказсем кăларнă. Вăл приказсенче предприяти директорĕсене общежитисене йĕркелес тата уйăхлăха ирттерес ĕçре комсомол организацийĕсене пур енчен те пулăшма хушнă.

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Физкультурăпа Спорт Ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ облаçри тата хулари комитетсене вырăнти майсемпе усă курса общежитисем çумĕнче спортплощадкăсем тăвас ĕçе тÿрремĕнех хутшăнма хушнă.

Пирĕн ĕçри хăшпĕр результатсем

Май уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăннă хыççăн пирĕн завод юлашки уйăхсенче хăйĕн ĕçĕнче чылай паллă улшăнусем турĕ. Завод февральти плана 104,9 процент тултарнă пулсан, март уйăхĕнче вăл 117 процент тултарчĕ. Çапла вара эпир 1-мĕш квартала ăнăçлăн вĕçлерĕмĕр.

Пĕрремĕш кварталта пирĕн коллектив производство планне тултарассишĕн кĕрешнипе пĕрлех, продукцин пахалăхне лайăхлатас, унăн хăйне ларакан хакне йÿнетес, материалсемпе чĕртавара перекетлес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлерĕ. Виçĕ уйăх хушшинче эпир чĕртавара планпа палăртнинчен 9,6 процент, сĕрмелли япаласене 8,6 процент, горючие 10,4 процент тата ĕçукçине 3 процент перекетлерĕмĕр.

Кăçал квалификациллĕ рабочисем хатĕрлес ĕçе те лайăхрах туса пыратпăр. Ку таранччен 25 çынна вĕрентсе хатĕрленĕ, халĕ тата 15 çынна вĕрентетпĕр. Вĕсенчен чылайĕшĕ халь хăйсем тĕллĕнех ăнăçлăн ĕçлеççĕ.

Пирĕн коллективра стахановецсем те сахал мар. Паянхи куна производствăра ĕçлекенсенчен нормăна тултарса пырайманнисем 2 процент çеç шутланаççĕ, 64 процентчĕ ĕç нормисене кулленех 150 процентран кая мар тултарса пырать. Стахановкăсем Зубрилина, Балагаева, Иванова, Семенова, Куприянова, Якасова юлташсем куллен нормăна 230—270 процент таран тултарса пыраççĕ. Обойщицăсем Шубняковăпа Смирнова юлташсем март уйăхĕнче нормăсене 230 процент тултарса ĕçленĕ, халĕ вĕсем 250 процент тултараççĕ.

Производствăри çитĕнÿсене эпир рабочисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилени не пула турăмăр. Кашни цехрах агитаторсем пур, вĕсем рабочисене çĕршывра пулса иртекен хыпарсемпе паллаштараççĕ. Кунсăр пуçне çак 3 уйăх хушшинче ятарласах 5 хутчен лекцисемпе докладсем тунă, 18 хутчен производствăллă канашлусем ирттернĕ.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те пурха. Вăл çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерсе, эпир тăван çĕршыва татах та ытларах продукци парассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçлетпĕр. Май уявне апрельти плана ытлашшипех тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешетпĕр.

Ф. Павлов.
Çĕмĕрлери «Труженик» заводри парторганизаци секретарĕ

Сурăх 5 путек тунă

КАНАШ. Яманкассинчи Доронин ячĕпе тăракан колхозра Федор Алексеев колхозникĕн пĕр сурăхĕ 5 путек пăрамласа панă. Çавăн пекех Уçырмари «Комбайн» колхоз членĕн Кирилл Григорьевăн та пĕр сурăхĕ виçĕ путек туса панă. Сурăхсен путеккисем пурте сывă ÿсеççĕ.

И. Максимов.

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

ĂМĂРТКАЙĂК

ПОЭМА

12. Гастелло самолечĕ пурăнать

Бомба хыççăн бомба ăсатăр.—
Ăçта нимĕç юнпа çул хывать.
Паттăрсем, çирĕп тăрăр, тасатăр
Нимĕç иркĕрĕнчен çĕршыва.

Ав татах юханшыв урлă нимĕç
Вăй пухса хатĕрленнĕ каçма.
Орлов тухрĕ унта ăна хирĕç —
Тăшманпа бомбăпа калаçма.

Юханшыв çăра пулă шÿрпи пек
Вĕреме тытăнсан вутпала,
Орлов лăпкăн каларĕ: — Халь çитĕ.
Ĕнтĕ халь килелле каймалла.

Вĕçтерет базăна вăл хавассăн,
Темле юрă хăй тĕллĕн юрлать.
Анчах база патне çывхарсассăн
Ырă мар япала асăрхать.

Çывăхра çăхансем явăнаççĕ,
Явăнаç вут та хĕм сирпĕтсе.
Аэродром ăçтине ухтараççĕ
Сĕмсĕр ĕмĕтлĕ «Мессершмиттсем».

Орлов сисрĕ çакна, асăрхарĕ,
Кун пек чух çĕр çине анма çук.
Нимĕç сĕмсĕр. Эпир чее мар-и!
Чее мар-и эпир кун пек чух.

Тăшмана систерес мар тесессĕн,
Палăртас мар тесен базăна,
Инçерех вĕçсе кай, тусăм, эсĕ,
Тен кайран мĕнле пулĕ — сăна.

Çавăнпа та Орлов иртсе карĕ
Хăйĕн хаклă, тăван базинчен.
Тĕрĕслерĕ:—Бензин сахал мар-и?
Пит сахал, вĕçме çуккă инçе.

Вĕçме çуккă инçе. Хупăрланă,
Кĕрхи каç хупăрланă çĕре.
Çăмăл мар, çăмăл мар-çке, тăванăм,
Летчик пурнăçĕ çут тĕнчере.

Ăçта ларăн ĕнтĕ арканмасăр, —
Йĕп чиксен курăнмасть кĕрхи каç.
Çăхансем çывăхран тасалмасăр
Базăна таврăнма юрамасть.

Тăван база! Унта юлташсем-çке,
Вĕсене юрамасть палăртма.
Тĕрĕс шухăш тупасшăн вĕçевçĕ,
Анчах шухăшлама вăхăт мар.

Бензин вунă минутлăх çитет-и...
Çĕрте тĕттĕм. Çĕре анма çук.
Тем шуйттан мăйракийĕ çине те
Тăрăнма пултаран кун пек чух.

Çавăнпа вилĕмрен çăлăнмашкăн,
Наставлени кĕскен хушнипе,
Парашют тăхăнса экипажăн
Çĕрелле сикмелле ушкăнпех.

Наставлени... Анчах та машинăн
Мĕншĕн, мĕншĕн ÿксе вилмелле?
Миçе хут вилĕмрен вăл хăй çăлнă
Тĕрĕс-тĕкĕл çитерне киле!

Тата ку вăл — Гастелло парнийĕ,
Тват моторлă хăватлă гигант.
Мĕн чунпа ăна кÿрĕн эс вилĕм?
Çук, сутаймĕ ăна халь нихçан!

Орлова чĕри çирĕп каларĕ:
Самолет чĕрĕ, сывă юлать.
Халь кунта та Гастелло кăварĕ
Орлова пачĕ паттăр хăват.

Орлов тусĕсене приказларĕ:
— Сикĕр те вырăн тупăр ларма.
Вырăн тупăр, çĕртен сигнал парăр,
Вăхăт юлчĕ вĕçме нумай мар. —

Экипаж çакна хăвăрт ăнланчĕ,
Çынсем чăмрĕçĕ тĕттĕмелле.
Самолет теме туйнăн хумханчĕ,
Ĕнтĕ унăн сигнал кĕтмелле.

Орлов юлчĕ пĕччен. Хупăрланă,
Кĕрхи каç хупăрланă çĕре.
Çăмăл мар, çăмăл мар-çке, тăванăм,
Летчик пурнăçĕ çут тĕнчере.

Моторсем юлашки хут çăтаççĕ
Типсе çитнĕ тумлам бензина.
Çĕр çинче хайхи çулăм çуталчĕ,
Ĕнтĕ шанчăк хĕлхемĕ çунать.

Хыттăн тапрĕ Орловăн чĕрийĕ,
Ĕнтĕ акă çĕре вăл анать.
Хирĕç çапрĕ чĕр сывлăш хĕрÿллĕн,
Чаплă улăп ĕнтĕ пурăнать.

Пĕчĕккеççĕ «У-2» вырнаçмалăх
Ансăр, ансăр пĕр лаптăк çине
Анса ларчĕ гигант--ăмăрткайăк,
Бензин пĕтрĕ çĕре çитсенех.

Тăван çĕр! Иксĕлми тăван çĕрĕм!
Орлов выртрĕ, чуптурĕ ăна.
Паттăр улăп Гастеллăмăр чĕрĕ,
Вăл Орлов чĕринче пурăнать.

(Малалли пулать).

Малалли. Поэма 61-мĕш номертен пичетленме пуçланă.

Чехословаксен СССР-ти çар чăсĕн командирне Свобода полковнике

Господин полковник, Хĕвелтухăç фронтĕнче эсир командир пулса ертсе пынипе пирĕн часть фашистла кĕтÿсене хирĕç çапăçăва кĕни çинчен, çапла майпа советсен патăр наступленийĕ çинчен пĕлтернине эпĕ чĕререн савăнса вулатăп. Çĕнтерÿлĕ Хĕрлĕ Çар хушшинче пирĕн часть хăйне тивĕçлипе тытни, хăйĕн умне тăратнă задачăсене пурнăçлани çинчен вуланă чухне чысăн пурнăçа кĕртрĕ. Патриотла тивĕçе ăнлануллăн пурнăçланăшăн Сире, ытти офицерсемпе унтер-офицерсене тата рядовойсене хĕрÿллĕн тав тăватăп. Союзниксен пур фронтĕсенче те, пушшех те пирĕн советлă союзниксен çĕнтерÿллĕ армийĕпе пĕрле Хĕвелтухăç фронтĕнче çапăçма пултарни хамăр çĕршыв тата союзниксемпе пĕрле пулса çĕнтерĕпĕр. Сире тата СССР-ти пирĕн воинсене пурне те чĕререн саламлатăп. Халăхсен ирĕклĕхĕшĕн пулса ирттернĕ çынсене те чыс тата çăвап пултăр.

Чехословаксен хĕçпăшал вăйĕсен Верховнăй командующийĕ доктор **ЭДУАРД БЕНЕШ.**

Чехословаки парламенчĕн СССР-та пурăнакан членĕсем чехословаксен çар чăсне саламлаççĕ

Чехословаксен фронтри çар чаçĕн паттăр офицерĕсемпе салтакĕсене тата унăн полковникне Свободăна хĕрÿллĕн саламлатпăр, çапăçури паттăр ĕçĕсемшĕн хĕпĕртетпĕр.

Чехословаки парламенчĕн СССР-та пурăнакан членĕсен ячĕпе
Готвальд, Копецкий.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр-Африкăри Штабĕн пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: Тунис фронтĕнчи çурçĕрпе кăнтăр секторĕсенче ĕнер союзниксем тăшмана хĕссе пынă. 8-мĕш арми çапăçакан фронтра Англи войскисем хăваланипе тăшман каялла чакса пынă. Вади-Акарит патĕнчи çапăçуран пуçласа тыткăна илнисен хисепĕ 8-мĕш армин фронтĕнче кăна хальхи вăхăтра 9.500 çынна çитет. Американецсен 2-мĕш корпусĕ, хăйĕн операцийĕсене Эль-Геттартан хĕвелтухăçнерех районта туса пынă. Çурçĕрте пĕрремĕш арми атакăласа ĕнер тактика енчен паха пунктсене йышăнса илнĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ РУР ÇИНЕ ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх апрелĕн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕ Рурти тĕрлĕ объектсем çине вĕçсе пырса питĕ вăйлăн тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсем тăшман шывĕсене минăсем пăрахнă. 21 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

АМЕРИКА ХАÇАЧĔ ВĂРÇĂ МĔНЛЕ ПЫНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар хĕлле тунă наступление пăхса тухса, «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çаксене палăртать: совет войскисем хĕлле тунă наступлени хальхи вăрçăра чи вăйли тата историре паллă контрнаступленисенчен чи вăйли пулать, тет. Хăйсен хĕллехи наступленине пула совет войскисем нимĕçсем çулла тунă наступление пĕтерсе хучĕç çеç мар, тата пысăкрах результатсем турĕç. Çакăнпа пĕрлех, тенĕ хаçатра, çак хĕлте вырăссене йывăр килнине манма юрамасть. Совет Союзне материальнăй пулăшу пани, Çурçĕр Африкăри операцисем тата Германи çине сывлăшран тапăннисем, паллах, Хĕрлĕ Çарăн ăнăçлă наступленине пулăшрĕç.

Апла пулин те хĕвеланăç держависем, Совет Союзĕпе танлаштарсан, хăйсене тивĕçлине сахал турĕçха. «Американецсем, вырăссем пекех, ытларах вăя пĕр вăхăтра пĕтĕçтерсе тăшмана хирĕç тухма кирлине ăнланаççĕ». Çывăхри вăхăтрах гитлеровецсене аркатса тăкас шутпа союзниксен хăйсен пĕтĕм вăйне пухмалла, тесе палăртать хаçат.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн вăрçă çинчен çырса тăракан сотрудникĕ майор Элиот англичансемпе американецсем тапăнса кĕрессине хирĕç Европа çыранĕсене пĕтĕмпех çирĕплетрĕмĕр, тесе мухтанакан нимĕçсенчен тăрăхласа кулать. Çавăн пек пропаганда, тет Элиот, нимĕçсен вăйсăрлăхне, вĕсем хăранине палăртать.

Паллă радиокомментатор Браун, радио тăрăх тухса каласа, Англипе США-на кăçалхи çуркунне Европăна тапăнса кĕме чĕннĕ. «Çакă вăл, — тенĕ Браун, — вăрçă вăхăтĕнче те, вăрçă пĕтнĕ хыççăн та Совет Союзĕпе таччăн çыхăнса тăрассине çирĕплетме пулăшакан май пулĕччĕ», тенĕ.

ТУРИНРИ «ФИАТ» ЗАВОЧĔСЕНЧИ ЗАБАСТОВКА

ЛОНДОН, апрелĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, мартăн иккĕмĕш çурринче Туринра, «Фиат» завочĕсенче 50 пин ытла рабочи забастовка пуçласа янă. Мир тума, ĕç укçине хăпартма, апат-çимĕç снабженине лайăхлатма ыйтса, рабочисем массăллă демонстраци туса ирттернĕ.

ГЕРМАНИПЕ ДАНИРЕ ДИВЕРСИПЕ САБОТАЖ ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Германире диверсипе саботаж ĕçĕсем час-часах пулса иртеççĕ. Нумаях пулмасть Франкфурт хулинче Одер шывĕ урлă хунă пысăк чугунçул кĕперне сирпĕтсе янă. Вăл кĕпер урлă çар грузĕсен чылай пысăк пайĕ Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта кайнă. Халĕ вăл грузсене тавра çулпа илсе кайма лекет.

Халĕ паллă пулнă тăрăх, Берлинри Фридрихштрассе урамĕнчи вокзала сиенлени тата Потсдам вокзалне аркатни саботажла ĕç пулнă. Диверсипе саботажла ĕçсем чылай сарăлнă пирки нимĕçсем Германи, Франци тата Дани чугунçулĕсене сыхлама ятарласа хурал тăратнă.

СТОКГОЛЬМ, апрелĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Данири чугунçулсем çинче диверсипе саботажла ĕçсем нумай пулнă. Январĕн 28-мĕшĕнче Копенгаген — Роскильде çулĕ çинче пысăк участока аркатса тăкнă пулнă. Февралĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрлĕ тепĕр чугунçулăн тĕрлĕ участокĕсенче пĕр вăхăтрах икĕ взрыв пулса иртнĕ. Фюн утравĕ çинче, чугунçул çывăхĕнче, взрыв тăвакан япаласем нумай тупнă. Нюборг-Мидельфарт чугунçулĕ çинче икĕ чугунçул составне сирпĕтсе янă тата станцири сооруженисене аркатса тăкнă.

Ютландири чугунçулсем çинче те саботажла ĕçсем нумай тунă.

КИТАЙРА ОБЯЗАТЕЛЬНĂЙ ÇАР ПОВИННОÇĔ ÇИНЧЕН ÇĔНĔ ЗАКОН КĂЛАРНĂ

ЧУНЦИН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Сентрал Ньюс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çар министрĕ Хо Ин-цин правительствăпа Гоминдан ЦИК-ĕн заседанийĕнче обязательнăй çар повинноçĕн çĕнĕ законĕ çинчен доклад туса панă.

Кивĕ закон тăрăх çĕршывăн хăшпĕр районĕсенче армие хăй ирĕкĕпе каякансене илмелли йĕрке пулнă. Нумайĕшне, вăл шутра вĕренекенсемпе государство служащийĕсене, армие илес тĕлĕшпе отсрочка панă. Тĕрĕссипе илсен, чăн-чăн мобилизаци йĕрки пулман.

Çĕнĕ закон тăрăх, 20 çула çитнĕ арçынсен пурин те призыва тăмалла. Армире ĕлĕк виçĕ çул пурăннă, халь 2 çул пурăнмалла пулать. Пулăшакан çар службине хĕрарăмсене те хутшăнтарма паллă туса хунă. Вăрçă вăхăтĕнче 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ пур арçынсене те çар службине илмелле. Хăй ирĕкĕпе çара каякансене илесси уйрăм распоряжени тăрăх кăна пулма пултарать.

Çĕнĕ закона пурнăçа кĕртни, тенĕ Хо Ин-цин, çапăçма пултаракан вăйлă çар туса хума пулăшĕ. Вăл çар Китай ирĕклĕхĕшĕн ăнăçлăн çапăçма пултарĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Завода литейнăй производствăра ĕçлеме квалификациллĕ рабочисемпе учениксем (16 çула çитнисемпе унтан иртнисем) тата волочильщиксем, электромонтерсем, подсобнăй рабочисем васкавлăн кирлĕ.

Литейнăй тата волочильнăй производствăра ĕçлекенсене спецодежда параççĕ тата хушса апат çитереççĕ.

Çавăн пекех тата тимĕрçĕ, шорник, возчиксем кирлĕ. Вĕсене общежити параççĕ.

Вахтерсемпе пожарнăй работниксене (арçынсене те, хĕрарăмсене те) йышăнаççĕ, общежити параççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Карл Маркс урамĕ, 80, пропуск бюровĕ. Ирхине 11 сехетрен пуçласа кăнтăрла виçĕ сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1300 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.